*И. Н. Юркинъ.*

# ХАЛАПСЕМ.

## (СКАЗКИ).

На чувашскомъ языкѣ.

КАЗАНЬ.
ЦЕНТРАЛЬНАЯ ТИПОГРАФІЯ.
1907.

Всесоюзная БИБЛИОТЕКА имени В. И. ЛЕНИНА
3587-45

# ХАЛАПСЕМ.

## (СКАЗКИ).

ПУБЛИЧ. и РУМЯНЦОВ. МУЗЕЙ БИБЛІОТЕКА

### 1.

### Ёçекен сăрана малтан кам тунă.

Пĕр йурлă çын пит наţар пурăннă. Пĕре çапла хиресухана кайсан, кăнтăрла киле килеţţен кăнтăрлахи апата унтах çийĕп тесе шухăшласа кушалне çăкăр ţиксе кайаĭ. Хăй анине сухаланă ţухне шуйтан аţи вăрттăн кунăн çăкăрне вăрласа кайаĭ. Ку çапла ĕçлесен, кăнтăрла çитсен çиме ларса кушалне уçса пăхаĭ, çăкăрĕ çукне курсан:—«çăкăрăма кам илсе кайнă?» тесе шухăшла пуçлаĭ. Никам илсе кайнине те пĕлмесĕр:—«ан тив ĕнтĕ, кам илсе кайнине Турă пĕлет пулĕ»,—тет. Пăртакçă кансан, хăй каллех—«каçţен ĕçлесе пĕтерес», тесе тытăнţĕ тет ĕçлеме. Каç пулсан шуйтан ывăлĕ хăйĕн пуçлăхĕ патне тавăрăнсан кунтан: «есĕ мĕн турăн», тесе ыйтса пĕлет.

— «Мушикĕнне кушалĕнţен çăкăрне вăрларăм»,—тет та.

— «Çăкăрне вăрласан мушик мĕн каларĕ?» тет.

— «Кам илнине Турӑ пӗлет пулӗ», терӗ, тет шуйтан аҫи.

— «Апла Турра асӑнҫӗ пулсан, пыр, есӗ ҫав ҫынна виҫӗ ҫулҫен ӗҫлесе пурӑн!» тет.

Шуйтана хӑйне асӑннӑ пулсан, паллӑ, ҫавӑнпа ӑна апла виҫ ҫулҫен ӗҫлеттерме хушман пулӗҫҫӗ.

Ку шуйтан аҫи ҫасах ҫын пулса ҫав мушик патне хире ӗҫленӗ ҫӗре пыраҭ те:—«мушик, есӗ мана тарҫа тыт»,— тет. Мушикӗ ӑна хирӗҫ:

— «Хам та пит йурлӑ ҫын, лашам та манӑн авӑ пит наҫар, йепле сана тарҫа тытам», тет.

— «Тыт!» тет шуйтан аҫи те ун патӗнҫен каймасӑр.

Калаҫсан-калаҫсан мушикӗ кӑна тарҫа тытса йараҭ те хӑй урапа айне выртса тарҫӑ йепле ӗҫленине пӑхса выртса пуҫлаҭ. Шуйтан аҫи ӗҫлеме тытӑнсанах хӑй мушикӗн наҫар лаши шуйтан хӑваҫӗпе тытӑнҫӗ тет темӗн тӗрлӗ вӑйпа ӗҫлеме. Сухи пуҫӗ парӑлтаттарса анҫах пыра пуҫларӗ, тет. Акнӑ пӗр тыррисем ӗлӗкхине пӑхнӑ ҫӗрте уйрӑм темӗн тӗрлӗ вӑйлӑ аван пула пуҫлаҫҫӗ. Виҫӗ ҫул хушшинҫе ҫапла шуйтан аҫи ӗҫленӗ пирки хай мушик ҫисти пуйса кайаҭ. Кӳрши-аршисем пӗтӗмпе тӗлӗнсе тӑраҫҫӗ. Ҫапла пуйса ҫитсен, шуйтан аҫи кӑна:—«епир пуйрӑмӑр ӗнтӗ, аҭа пурне те ҫӗнсе ӗҫкӗ тӑвар?» тет. Хӑй малтан шуйтан аҫи сӑра тӑваҭ, хӑмла илсе килсе йарса йӳҫӗ тет. Сӑри ӗлкӗрсен, пӗлекен тус-йышӗсене, хурӑнташсене пурне те ҫӗнсе пуҫтарса ӑшӑ сӑра ӗҫтере пуҫлаҭ. Лешсем, халиҫҫен сӑра ӗҫмен ҫынсем, пурте ӗҫсе ӳсӗрӗлеҫҫӗ. Тепӗр кунӗ пурте мухмӑрласа ҫирлеҫҫӗ, пуҫӗсем ыратаҫҫӗ: «ку пире мӗн турӗ?» тесе ҫисти тӗлӗнеҫҫӗ. Ун патне кайса унтан: «есӗ пире мӗн ӗҫтертӗн?“ тесе ыйтса пӗ-

леççĕ. Кусем—„сăра ĕçтертĕмĕр“, теççĕ. Хăйсем татах нӳхрепрен сăра ăсса кĕрсе çак çынсене тăраниччен ĕçтереççĕ. Мухмăрĕсем пĕтеççĕ; хăйсем каллех ĕлĕкхи пек ӳсĕр пулаççĕ. Çавăнтан вара вĕсенчен курсах ыттисем те хăйсем валли çапла сăра тăва пуçларĕç, тет.

## 2.

## Патша ывăлĕпе тимĕрçĕ ывăлĕ.

Патша арăмĕ, йывăр çын, вăрман-пахчинче хăйĕн савнă çыннипе çӳренĕ чухне ăшĕнчи ачи: «вăрăпа вăрă çӳрет, йасар çынпа йасар çын çӳрет, лайăх çынпа лайăх çын çӳрет», тет. Çак сăмахсене илтсен, патша арăмĕ кăна çуралсанах вĕлерме шухăшлаҫ. Çуратас вăхăт çитсен, патша арăмĕ ача тунă вăхăтра тимĕрçĕ арăмĕ те ача тăваҫ. Патша арăмĕ хăй ачине вĕлерес вырăнне çав тимĕрçĕ арăмĕ ачипе улăштарттараҫ. Патши ăна-кăна пĕртте пĕлмест. Хай ача ӳссен, патша çав тимĕрçĕ ачине йывăç пăхчинче (сатра) çӳре- ... чухне вăрăм йывăççене аван чăршăсене курсан. „ку йы-...çран ай-хăй кăмăрăк нумай пулĕччĕ“, тет. Ку мĕшĕн апла калаçнине патши пĕртте пĕлмест, ăнланаймасҫ. Патша ачи тимĕрçĕ патĕнче йалан ача-пăчасем пуçтарса вĕсене салтакла ...ыçатаҫ, мĕн тăваҫ. Пысăкрах ӳссен, пĕр йенелле кайса çапла темĕн чухлĕ çын пуçтарса вĕсене салтакла вĕрентет те ашшĕ килне, патша çуртне, вăрçăпа пыраҫ. Вăл вăхăтра килĕнче амăшĕ кăна пулаҫ. Амăшĕ кăна палласа;—„есĕ çапла-çапла çынсем пуçтарса салтакла выçатса пурăнатăн, аçу

сана унӑшӑн вӗлерттерӗ. Есӗ кунта ҫ̌ухне аҫу килес умӗн ҫак' арҫ̌ана пытан", тет. Ку арҫ̌ана пытансанах амӑшӗ ҫав арҫ̌а ҫине улӑхса ларса:—«патша ҫинҫ̌е ларатӑп, патшана куратӑп», тесе калаҫса ларать. Патши те хӑй арӑмӗ ҫапла калаҫса ларнине илтсен:—«есӗ мӗн калаҫатӑн? Йе ухмахланатӑн?« тесе ыйтать. Арӑмӗ те:—«хай инкек киле килҫ̌ӗ», тет те арҫ̌ине уҫҫа упӑшкине кӑтартать. Ашшӗпе амӑшӗ кӑна ҫакса вӗлерттерме шухӑшласа ҫакмалли йупасем ларттараҫҫӗ, вӗренсем хатӗрлеттереҫҫӗ. Ҫакас вӑхӑт ҫитсен, кӑна ҫакмалли ҫӗре илсе кайаҫҫӗ. Ҫав вӑхӑтра ку:—„мана выҫ̌ама вӑхӑт парӑрҫ̌ӗ!" тет. Кусем параҫҫӗ. Виҫӗ тапхӑр выҫ̌аса илсен:—«малти урапана шуйттан илсе пырать, кайрине Турӑ», тет. Ку сӑмахсене мӗшӗн каланине пӗри те пӗлмеҫҫӗ. Ывӑлӗ каллех:—атте асту халӗ, санӑн туллӑна манӑн ҫ̌ӑхӑсем суйласа пӗтерне", тет.

Ашшӗ ҫавӑрӑнса пӑхсан, курах кайать, хӑйӗн салтакӗсене ывӑлийӗн салтакӗсем пӗтернине. Йулашкинҫ̌ен амӑшне те вӗлерттерет.

## 3.

## Райа ҫакланнӑ.

Ӗлӗк пӗр карҫ̌ӑкпа пӗр старик пурӑннӑ. Старикки вӑрман касма тесе вӑрмана кайнӑ. Вӑрманӗ пит шултӑра пулнӑран, тытӑннӑ ку касмашкӑн вӑрманӑн пӗҫ̌ӗкҫӗрех тураҫ̌ӗсене. Улӑхса ларать турат ҫине те ҫав йывӑҫнех тытӑнать касмашкӑн. Вӑл ҫапла каснӑ вӑхӑтра иртсе кайакан ҫын ку ҫапла хӑй ларакан йывӑҫ туратне каснине кур-

сан:—„итле халĕ, есĕ ӳкетĕн!“ тесе каласа иртсе кайаҭ. Унҫҫен те пулмасҭ, хай ватă старик йывăр туратне кассан, тӳраҫĕпе пĕрле хăй те çĕре лаплатса ӳкет.—«Ку вара иртсе кайакан çын епĕ ӳкессе пĕлҫĕ-çке. Вăл, ахăр, епĕ хăçан вилессине те пĕлет пулĕ; çавна ыйтса пĕлем халĕ», тесе ун хыçĕнҫен ишекне кӳлсе ҫуптара пуçларĕ, тет. Хăвалаласа çитсен: „епĕ ӳкессе есĕ пĕлсеттĕн, епĕ хăçан вилессе те есĕ пĕлетĕн пулĕ, тархашшăн каласа парсамҫҫĕ?» тесе ыйта пуçлаҭ. Ку та хăйĕнҫен çапла ыйта пуçласан, нимĕн калама аптăраса, пăхса тăра пуçлаҭ.—«Тархашшăн есĕ каласа пар, есĕ пĕлетĕн?! тет. Ку ҫасах йепле каламаллине шухăшласа илсен:—„Есĕ ишекĕ виçĕ тапхăр хыçалтан шăршлă сывлăш кăларса йарсан (пăсарсан) вилĕн“,—тет. Апла каласан ку та ҫасрах урапи çине улăхса ларса калле килне тавăрăна пуçлаҭ. Çул çинҫе пынă ҫухне—ишекне хытăрах ҫуптăр тесе аллинҫи ҫăпăрккипе (пушипе) шарт çапаҭ. Ишекĕ çав вăхăтпа шарт тутарса хыçалтан усал шăршлă сывлăшне кăларса йараҭ. Ку та:—„Ах Турă, пуç ырата пуçларĕ!“ тесе кăшкăрса йараҭ. Пырсан-пырсан тата çапла ҫăпăрккипе шартлаттарса сăптăрсан, ишекĕ каллех çапла шартлаттарса ĕçерсе йараҭ....—„Ах Турă! ăш ырата пуçларĕ“,—тет. Хăй йалан хăваласса анҫах пĕлет. Йалне çитеспе киле ҫасрах çитесҫĕ, тесе ишекне тата хытă шарт тутарса çапаҭ. Ишекĕ те хăйне çапла хытă çапнăран, шарт! тутарса виççĕ мĕш тапхăр усал-шăршлă сывлăшне хыçалтан ĕçерсе йараҭ, Унҫҫен те пулмасҭ ку та ишекĕ виçĕ тапхăр шартлаттарса йанине илтсен, урапи çинҫен çĕре кĕрĕслетсе кайса ӳкет те: „акă вилетĕп! акă вилтĕм иккен!“—тесе каçса выртаҭ, тет. Лаши кĕпер урлă каçса кайса килне тавăрăнаҭ. Çав вăхăтра вăл çулпа улмă

сутакан пĕр ăлав улма тийесе пырайˇ, тет. Кỹ çапла кĕпер патĕнҫе выртнине курсан, ку улма сутаканăн лаши кунтан хăраса, ĕрĕхсе кайса, улма ăлавне, кун çине тỹнтерсе хăварҫĕ, тет. Ку вилни те хăй çине улмасем тăкăннине курсан—„епĕ райра иккен, Турă мана улмасем паҫĕ", тесе улмасем çисе выртса пуçлайˇ. Лешĕ лашине тытсан калле улмисене тийеме пырайˇ. Ку çапла улмисене çисе выртнипе курсан:—„есĕ кунта мĕн ĕçлесе выртатăн?" тесе ыйтайˇ. Ку та ăна хирĕç:„ епĕ вилтĕм, Турă мана райа кỹртсе улмасем паҫĕ", тет. Лешĕ кăна аллинҫи ҫĕн ҫăпăрккипе пĕр—икĕ тапхăр пит хытă ҫашлаттарса сăптăркаласа илсен, „*епĕ вилтĕм*" тесе выртакан старик, ҫĕрĕлсе сиксе тăҫĕ тет те, килне тара паҫĕ, тет. Тавăрăнсан, хăй карҫăкне: „епĕ пайан вилсен райа кĕрсеттĕм, унта мана Турă улмасем çитерҫĕ", тесе каласа парайˇ, тет.

## 4.

## Çуклăхĕ калаçтарнă.

Икĕ çын арлă-арăмлă пỹртре ҫỹреҫе умĕнҫе калаçса лараççĕ, тет:—„Ех!" тесе калайˇ, тет пĕри.—„Турă пире пĕр çĕр тенкĕ укçа кăна паринҫҫĕ. Ытла пулсан та илмĕттĕм, кайа пулсан та илмĕттĕм", тесе калайˇ, тет. Кусем çапла калаçсa ларнă вăхăтра пĕр пуйан кỹсем мĕн çинҫен калаçнине иртсе кайнă ҫухне илтсе, кусенĕн ҫỹреҫи çине вăрттăн йенҫĕкпе çĕр тенкĕрен пĕр тенкĕ кайа туса укçа хурайˇ. Кусем ирхине тăрсан, ҫỹреҫи çинҫе йенҫĕкпе укçа выртнине курсан:—„Акă

Турӑ пире укҫа панӑ иккен“, тесе тытӑнаҫҫӗ сума. Ҫӗртен пӗр тенкӗ кайине пӗлсен, шухӑшлаҫҫӗ: „Кӑна илес-и, илес мар-и?“ тесе. Пайтахҫен шухӑшласан, —„кунта 99 тенкӗ иккен, йенҫӗкне пӗр тенкӗ хисепленӗ пулӗ“, тесе ку тӑхӑр-вун-тӑхӑр тенке илеҫҫӗ. Вӑрӑсем вӑрласа кайасран хӑраса ниҫта хума пӗлмеҫҫӗ. Ҫӳреҫе ҫине укҫа пырса хураканни кӗсем укҫине ӑҫта пытарнине вӑрттӑн пӑхса тӑрать. Ку йурлӑ ҫыннисем йенҫӗкри Турӑ панӑ укҫине кирлӗшӗн пӑртак илеҫҫӗ те ытлашшине шерте (шуҫӑ) тӑррине ҫыхса шертине карта патне ҫӳлелле тӑратса хуҫӗҫ, тет. Лешӗ пуйанӗ кусем укҫине ӑҫта хунине курса тӑраканскер, ҫӗрле тӗттӗм ҫухне, картишне кӗрсе хай шерте тӑррине ҫакса хунӑ йенҫӗкри укҫана антарса илет те йенҫӗк ӑшне ӗне тислӗкӗ тултарса каллех ӗлӗкхи пек шертине тӑратса хӑварать. Пайтах вӑхӑт иртсен, укҫа кирлӗ ҫухне ку ҫук ҫынни татах укҫа илме шухӑшласа шертине антарса йенҫӗкне астӑват. Курӑсӑн, унта укҫа вырӑнне ӗне тислӗкӗ анҫах пулнине курса: „укҫана, пӑҫӑланашшӗ, ӗне улӑхса ҫинӗ иккен, йенҫӗк ӑшне тула, тухса хӑварнӑ», тесе ҫиленсе. кайран вара ӗнине те пусса ҫирӗ, тет.

## 5.

## Упапа ҫӑваш тус пулнӑ.

Ҫӑвашпа упа тус пулҫӗҫ, тет. Ҫӑвашӗ упине:—„упа тус, айа ҫарӑк акар?“ тет.

— «Айа», тет упи те.

Хайхисем акрёç, тет çарăк. Çарăкĕ пулҫĕ, тет кĕсенĕн пĕтес çук. Упи акнă çарăкĕсене хăне илме шухăшласа, кă-на, ҫăвашне, калаť:—«Епĕ кунта мĕн çине утланса килнине есĕ пĕлейĕне? Пĕлсен, мĕн пур çарăк санăн пулĕ; пĕлмесен манăн», тет. „Есĕ утланса килнине епĕ пĕлсен, çарăксем ма-нăн пулĕçĕ, пĕлеймесен санăн“. тет.

— «Йурĕ», тет ҫăвашĕ те.

Упи тĕве çине утланса пыҫĕ, тет. Ҫăвашĕ хăй арăмĕ çине утланса пыҫĕ тет. Анҫах ҫăвашĕ арăмĕ çине утланнă ҫухне арăмийĕн пуçне кайалла туса утланҫĕ тет, çӳçне хӳре турĕ, тет.

Упи:—«Епĕ мĕн çине утланса килнине паллатăна?»—тесе ыйтрĕ, тет.

— „Паллатăп“, тет ку та.

— „Мĕн çине?“ тет.

— „Тĕве çине утланса килтĕн“, тет ҫăвашĕ.

— „Палларăн“, тет упи те.

Ҫăвашĕ те упаран:

— «Епĕ мĕн çине утланса килтĕм, есĕ упа тус, паллатăна?» тесе ыйтаť. Упи те пăхаť, пăхаť, тет нийепле те паллаймасť, тет: „Ку вара, ҫăваш тусăм, йепле выҫăх çине утланса килҫĕ-ши?.. Выҫăхĕ хăйĕ пăхсан: урисем пур, куҫĕ пур, хӳри пур, çурăмĕ пур, хырăмĕ пур, çăварĕ те пур...: Кунăн пуçĕ çташи??»... тесе пăхкалаť, тет.

Темĕнҫен пăхкаласан та нийепле те паллаймасан: «Çук ҫăваш тус, ку выҫăха епĕ паллаймастăп. Çарăксем санăн пулĕç» тет упи тĕлĕнсе.

## 6.

## Ахӑр самана вӑхӑтӗнҫе.

Пӗр ҫын пит йурлӑ пулнӑ. Ун патне пӗре ҫапла мулла пырса кӗрет те кӑна:—«есӗ акӑ пире пама тивӗҫлине нихӑҫан та пӗр пус та памастӑн», тет.—«Ей, мулла папай, епӗ мӗн парам ӗнтӗ, манӑн нимӗн те ҫук, пӗр ӗнем анҫах», тет.

— «Ӑна та пулин мана пар, мана панӑшӑн Турӑ сана пӗр ӗне выранне вунӑ ӗне, парӗ», тет мулли.

Ку, мӗскӗн, мулли ҫапла ыйтнӑран, йулашки ӗнине муллине парса йарай̆. Пӑхӑсӑн, мулланӑн ку ӗнипе мӗн пурӗ вунӑ ӗне пулса тӑрай̆. Пӗре ҫапла мулли ӗнисене ҫӑл кутне шӑварма тесе ҫак ҫук ҫын умӗнҫен хӑваласа кайай̆. Вак патне хӑваласа пырса ӗҫтерсен, ӗнисем калле килнелле таврӑна пуҫлаҫҫӗ. Мулли хӑй пӗр ҫынпа вак кутӗнҫе калаҫҫа йулай̆. Ҫав вӑхӑтра ку ҫук ҫыннӑн ӗни хӑйсенӗн ӗлӗкхи хапхи уҫӑ выртнине курсан унта кӗрех кайай̆; ун хыҫӗнҫен, паллӑ, ыттисем те кӗреҫҫӗ. Кӗсем ҫапла ушкӑнпа картишне кӗнине курсан, ку, ҫук ҫынни, ҫасах пӳртрен тӳхса ӗнисене карташӗнҫен картана хупса хурай̆. Мулли ӗнисем унта кӗнине курсан, ыйта пуҫлай̆. Ку памаст̆, мана Турӑ паҫӗ, есӗ ху каларӑн: „пӗр ӗне выранне сана Турӑ вунӑ ӗне парӗ“, тесе, тет. Темиҫе тапхӑр ыйтсаҥ та ку ҫапах та ӗнисене муллана памаст̆. Мулли вара нимӗн тума, нимӗн калама аптӑраса килне таврӑнай̆. Пурӑнсан, пурӑнсан ку ӗнисене хӑшне пусса ҫийет, хӑшне сутса йарай̆; ҫапла хӑтланса ӗнисене ҫисти пӗтерсе пӑрахай̆. Ӑна уншӑн йалӗнҫи ҫыннисем пурте «пӗр хутлӑ, ухмах ҫын», тенӗ. Ӗнисене сутса та пусса та

[stamp]

пӗтерсен, ҫак ҫук ҫын хӑне валли пӗр сурӑх анҭах усра пуҫлаҫ. Кӑна пур те ухмах та ухмах тенӗрен, вӗренекен аҭасем пур те ушкӑнпа кунӑн ҫурҭӗ патне пыраҫҫӗ те: «асатте, ыран ахӑр самана пулаҫ, аҫа сурӑхна пусса ҫийер! Пусса ҫимесен, пурӗ пӗр вӑл йулаҫ», теҫҫӗ. Ку та вӗсенӗн сӑмахне итлесе сурӑхне пусма пулаҫ. Пусса пӗҫерсе ҫиме уҭук йашкине пӗҫернӗ пек, хире илсе кайаҫҫӗ. Унта илсе пыраҫҫӗ: хурансем, шывсем, вутӑсем йатса. Сурӑхне пусса, хуран ҫаксан, тытӑнаҫҫӗ пӗҫерме. Сурӑх ашӗ пиҫиҭҭен ку ҫамрӑк аҭисем, ҫийӗнҭи ҭи лайӑх тумтирӗсене хывса пӑрахса, кайаҫҫӗ ҫывӑхри вӑрмана ҫырлана. Вутти пӗтсен, кӯ пурин лайӑх тумтирӗсене те вута пӑрахса ҫунтарса йараҫ. Лешсем ҫырларан килсен: «манӑн тумтирӗмсем ҫта?» тесе шырама пуҫлаҫҫӗ. Аптӑранӑ йенне кунтан та ыйтаҫҫӗ. Вӗсене хирӗҫ ку та:—«сурӑх ашне пӗҫерме вутӑ ҫитмерӗ, епӗ ҫавӑнпа сирӗн тумтирӗрсене хуран айне хурса ҫунтарса петертӗм». тет. Лешсем кирли йӗре пуҫлаҫҫӗ.

— „Мӗшӗн йӗретӗр, тумтирӗр сире мӗне кирлӗ?... Ыран пурӗ пӗр ахӑр самана пулаҫ, тетӗр?!“... тет. Нимӗн тума пӗлмесӗр ку, ҫамрӑк аҭасем, пиҫнӗ ашне ҫимесӗр йӗре-йӗре киле таврӑнаҫҫӗ‘ тет. Ку, ҫук ҫынни, пиҫнӗ сурӑх ашне килне йатса таврӑнса хӑйех ҫийе пуҫларӗ, тет.

7.

## Вунпӗр-мӗш ывӑл.

Авал пӗр ватӑ ҫыннӑн вун пӗр ывӑл пулнӑ. Вӯннӑшӗ кӗтӯ кӗтнӗ, пӗри, ҭи кӗҫӗнни, пиҭҭӗшсене апат леҫҫе пурӑн-

нă. Ашшĕ кăна пит йуратнă. Ыттисем ăна сиссе ку, кĕçĕн ывăлĕ çине çиленсе çӳре пуçлаççĕ. Пĕре çапла: «аҳăр ăна вĕлерер», теççĕ—те тытса типĕ пусса йараççĕ. Çавсем патĕнҫен çулпа пĕр хуçа иртсе пырат; тет. Кĕсем ăна:—аҫа сутатпăр, илетне?» тесе ыйтаççĕ, тет.

— «Илетĕп!» тет ку та. Хай аҫана пусран кăларса çак хуçана сутса йараççĕ. Хуçи кăна хăйпе пĕрле илсе кайат. Килне таврăнсан, унпа пĕрле иккĕш тытăнаççĕ пит аван сутă тума. Тавар илмĕ пынă улпут хуçаран ыйтат:

— „Ку санăн ывăлă пулат-и?“ тесе. Хуçи те: епĕ ăна сутăн илтĕм», тет. Улпуҫĕ каллех: «вăл аҫана мана сут-ҫĕ?“ тесе ыйтат.

— «Йурĕ, сутатăп», тет—те хуçи кăна сутса йарат. Улпуҫĕ çак аҫана хăй патне илсе кайсан, аван çынна пĕлсе, пур питĕрнĕ хуралтисенĕн çăраççи уççисене кăна шанса парат. Çавăнтан вара çак аҫа хăйте ҫисти пуйса кайат, тет.

## 8.

## Калмăксем тăлăп çĕлеттерни.

Пĕр вăкăр пулнă, ăна иккĕн кĕтнĕ: пĕри умĕнҫен, тепĕри хыçалтан. Ăна шăвармa тесе тинĕс хĕррине çирĕм-пилĕк çухрăм хăмăшсем урлă илсе кайаççĕ. Çав вăкăр шыв ĕçме пынă ҫухне хăмăшсене çисе çул туса пынă. Тинĕс шывĕ хĕррине çитсен вăкăрĕ тытĕнҫĕ тет тинĕс шывне ĕçме. Тинĕс шывĕ ку вăкăр ĕçнĕçемĕн типсе пыра пуçларĕ, тет. Çур-

ри пĕтсен, пĕр пулă ишсе пырать те çак вăкăра хыпса кайать. Вăкăр тăршшĕне утас пулсан, çынна виç кунлăх утма çул пулать. Пулă çав вăкăрпа çӳре-çӳре ҫисти вăйран сулăнса, кайран çыр хĕррине тухса, ⁻канса выртă пуçларĕ, тет. Ку çапла выртса тăнă вăхăтра пĕр ăмăрт кайăкĕ вĕççе пырса, кăна курсан, çĕклесе кайать. Ăмăрт кайăкĕ те ывăнса, хирте пĕр каҫака такине курсан унăн майраки çине ларса, тытăнать хай пулла çимешкĕн. Каҫаканăн сухалĕ айĕнҫе пĕр вата старик çумăртан пытанса тăнă. Курăсăн, каҫака старике сухалĕпе хупласа тăнă. Старикĕ çӳлелле пăхса калать: „пуçа мĕн пусрĕ?“ тет. Çав вăхăтра куçне пулă айак пĕрҫи шăмми çакланать. Ăмăрт кайĕкĕ вĕçсе кайсан, старик те килне таврăнать. Çулпа пынă ҫухне—„куçа мĕнле çӳпĕ кĕҫĕ?“ тет. Килне пырсан карҫăкне хай шăрпăкне, пулă шăммине, кăларттарать. Çавăн ҫухне хирпе хĕрĕх ăлав калмăксем пырса ҫарăнаççĕ, выртса çĕр каçмашкăн. Çĕрле тилĕ пырать те калмăксенĕн кĕççерен тунă хӳмĕсене пурне те тĕртсе ӳкерсе кайать. Пулă айак пĕр шăммине йатса кайать. Ирхĕне тăрсан калмăксем—«пирĕн хӳмесене кам тĕртсе укерҫĕ?“ теççĕ. Тилĕ ӳкернине пĕлсен, тытăнаççĕ хай тилле йĕрлеме. Тиллине тытсан, вĕлерсе çурри тирне сӳсе илеççĕ, çуррине хăвараççĕ. Çурри тирĕнҫен хĕрĕх калмăка хĕрĕх тăлăп çĕлетеççĕ.

## 9.

## Тĕлĕнмелле ĕç.

Пĕр çын вăрмана вутă тийеме кайать. Вуттине урапи çине тийесен: „манăн вара пурттăм çта пулҫĕ?“ тесе пăхкалать. Унта кунта пăхкаласан, ниçта та курмасть.

— «Акă, ҫисти тĕлĕнмелле ĕҫ пулҫĕ. Халĕ кăна пурттăм пур-ҫĕ, таҫта шăтăка ҫухалҫĕ», тет.

Ҫав-вăхăтра кăна сасă илтĕнет: „Вăл мĕн тĕлĕнмелле ĕҫ пулаĭ-и?“ тет. Ку ҫав сасса илтсен хăра йулаĭ.

— „Авă тĕлĕнмелле йапала ҫавă курҫĕ“, тет-те, тытăнаĭ кăна каласа пама.

— «Шуйттансем ăна лартса кайаҫҫĕ. Малтан пĕр йут йала, унтан тепĕр йала та. Ваттисенҫен—«Мускав хăш йенелле?» тесе ыйтсан, ҫав йенелле, тесе каласа параҫҫĕ.

Ҫулпа пынă ҫухне йалан шуйттансем лартса кайаҫҫĕ. Ҫул ҫинҫе кунăн ҫĕлĕкĕ ÿксе йулаĭ. «Ҫим халĕ, ҫĕлĕк ÿкрĕ», тесен, «ҫĕлĕкĕ санăн пилĕк ҫĕр ҫухрăм йулҫĕ», теҫҫĕ. Пырсан, пырсан, пĕр тĕттĕм вăрмана илсе кĕрсен, анма хушаҫҫĕ. Ансан, кăна тата йумана ыталама хушаҫҫĕ. Кинĕсене хăйă ҫутма хуш, теҫҫĕ. Хушсан, лешсем ҫасах хăйă ҫутаҫҫĕ. Курăсăн, ку хăй кăмакине ыталаса лара параĭ, тет. Авă ҫавă тĕлĕнмелле ĕҫ, тет.

## 10.

## Хăрăк йывăҫ ăшĕнҫи аҫа.

Ĕлĕк пĕр карҫăкпа пĕр старик пурăннă. Вĕсенĕн аҫипăҫисем пулман. Старик вăрмана вутă касма кайсан, тытăнҫĕ, тет пĕр хăрăк йывăҫа касма. Каснă ҫухне ҫав йывăҫ ăшĕнҫен сасă илтĕне пуҫларĕ, тет.—«Старик, есĕ мана ан кас, касатҫен ху патна илсе кай, епĕ сана ватăлмалăх кунăнта тăрантарса пурăнăп», тет. Ку ватă старик кăна килне илсе таврăнаĭ те хăй карҫăкне: „карҫăк, епĕ хамăр валли

ывӑл аҫа тупса таврӑнтӑм, вӑл пире ватӑлмалӑх кунӑмӑрта тӑрантарса пурӑнӗ", тет. Карҫӑкӗ те темӗн тӗрлӗ савӑнать.

— „Карҫӑк, есӗ ӑна малтан тӑранитҫҫен ҫитер, унӑн ҫийесси килнӗтӗр", тет.

Карҫӑкӗ те ҫиме хатӗрлесе сӗтел ҫине пӗр ҫӑкӑр илсе пырса хурать те кӑна,—«аҫам, ҫийе пуҫла!» тет. Кӳ выҫнӑскер, пӗр ҫӑкӑрне пӗре ҫийӳҫӗм ҫисти ҫисе йарать. Вӑл ҫапла нумай ҫинине курсан, карҫӑкӗ те: «старикккӗм, есӗ ывӑлна пӗр-пӗр ҫӗре тарҫа пар, епир иксӗмӗр ӑна ҫитерсе тӑрантараймӑпӑр», тет. «Йурӗ», тет старикки те. Тепӗр кунӗ старикки хай тупса таврӑннӑ ывӑл аҫине хӑйпе пӗрле йертсе унӑн вырӑн шырама кайаҫҫӗ. Ҫул ҫинҫе пырсан-пырсан кӗсене лаша сутса-улӑштаракансем тӗл пулаҫҫӗ те;—«есир капла ҫта кайатӑр? тесе ыйтса пӗлеҫҫӗ.

— „Аҫана тарҫа пама кайатӑп", тет.

Лаша сутса—улӑштаракансем те:—«Аҫана епир тарҫа тытӑпӑр, ҫулталӑка мӗн хак ыйтатӑн?» тесе ыйтаҫҫӗ. Старикки те вӗсене хирӗҫ:

— «Ҫимелле анҫах парасшӑн», тет.

— «Апла пулсан епир илетпӗр», тесе кӗсене хӑйсем патне лартса кайаҫҫӗ.

Килне ҫитсен, ҫи малтан кӑна ҫитерсе пӑхас тесе, ҫиме лартаҫҫӗ. Унӑн умне пӗр ҫӑкӑр, пӗр хӑпарту илсе пырса хураҫҫӗ. Ку ҫӑкӑрне те хӑпартуне те пӗр вӗҫрен ҫисейарать.

Ӗҫмешкӗн, тесе пӗр ҫӗрес сӑра илсе тухса лартаҫҫӗ. Ку сӑра ҫӗресне хӑлхисенҫен тытса сӑрине йӑлт! ӗҫҫе йарать. Лаша сутса-улӑштараканнисем те ку ҫапла пит нумай ӗҫҫе ҫинине курсан «пире кун пек тарҫӑ кирлӗ мар; пырӑр, тухса кайӑр!» тесе хӑваласа кӑларса йараҫҫӗ. Вӗсем патӗнҫен

тухсан кĕсем пырсан-пырсан пĕр улпут пурăнакан йала пырса кĕреççĕ. Улпуҫĕ кĕсене курсан:—«есир мĕн шыратăр?» тесе ыйтса пĕлет.—«Мĕн шырасси мĕнĕ, ак çак ывăлшăн тарçа кĕме вырăн шыраттăмăр“, тет старикки.

— „Ман патма кĕрĕр, çулталăкне мĕн хак ыйтатăр?“ тесе ыйтса пĕлет.

— „Çимелле анҫах парашсăнҫĕ“, тет.

Улпуҫĕ кăна тарçа тытаŏ те хăйĕн йашка пĕçерекен çыннине (пуварне) кăна çитерме хушаŏ. Пуварĕ сĕтел çине çăкăр илсе пырса хурсан, кăна: „çийе пуçла“, тесе çиме хушаŏ. Ку пĕр çăкăрне ҫасах çисе йараŏ. Лешĕ тепĕр çăкăр илсе пырса хураŏ те „хытăрах çи!“ тет. „Йурĕ“, тет ку та. Тытăнаŏ ҫипертерех çиме. Çисен-çисен улпуҫĕ кăна ĕçме тесе нӳхрепрен пĕр витре сăра илсе тухма хушаŏ. Ку, сăра витрине (ҫĕресе) каллех хăлăпĕсенҫен тытса йалт ĕççе йараŏ. Тарçи çапла пит хытă ĕççе çинине курсан улпуҫĕ:—„çиме есĕ пит аван çийетĕн иккен ĕç тавращĕнҫе йепле пулăн, курăп“, тет. Çисе тăрансанах улпуҫĕ кăна лаша кӳлтерсе вăрмана вутта йараŏ. Вăрмана пырсан упа кунăн лаши патне пырса тытăнаŏ лашине лӳҫĕркеме (çĕмĕрме).

Тарçи хăй лашине çапла упа çĕмĕркеленине курсан, урапи патне ҫупса пыраŏ те хай упанăн икĕ хăлхинҫен йарса тытса ҫасах урапине кӳлсе те хураŏ. Ăлавĕ çине вуттине йывăртарах пултăр, тесе нумайрах тийет. Çитменнине тата хăй тийенĕ ăлавĕ çинех улăхса лараŏ. Ку çапла упана кӳлсе киле вутă тийесе таврăннине улпуҫĕ курсан тепĕр тарçинҫен ыйтаŏ: „есĕ ăна йепле тĕслĕ лашана кӳлсе парсаттăн?“ тесе.—„Çӳреннине“, тет. „Ку вара урăх тĕслĕ

лаша ҫинҫе ларса килет—ҫке?" тет. Хӑй тӗлне ҫитсен:
—«санӑн ҫӳрен лашу ҫта?» тесе ыйтаӗ. Тарҫи те: „ҫӳрен лашана ак-ҫак упа лӳҫӗркесе (ҫӗмӗркелесе) пӑрахрӗ", тет. Улпуҫӗ упана тытса кӳлнине кура савӑннипе кӑна хытӑрах ҫитерме хушаӗ. Ҫисе тӑрансан, паллӑ, кӑна каллех вӑрмана вутта йараҫҫӗ. Вармана кайа пуҫласан; „ҫта кайатӑн?" тесе ыйтаҫҫӗ. „Кайатӑп", тет. Хӑй ҫта кайнине никама та каласа памасӗ. Улпуҫӗ ун хыҫӗнҫен пӗр вуннӑ-вуннилӗк ҫын йарса ӑна тытса вӗлерттерме хушаӗ. Улпут ҫыннисем аллинҫи сӑннисемпе кӑна ҫиша пуҫласан „ку:—йепле вӑрӑм ту. насем ҫырта пуҫларӑҫ", тет те тытӑнаӗ вӗсене пӗтерме. Пурне те вӗлерсе пӗтерсен, пурттине илсе ашшӗ патне килне таврӑнаӗ.

## 11.

## Кам мӗне хапсӑннӑ.

Пӗр ҫыннӑн виҫӗ ывӑлӗ пулнӑ; ашшӗ вилес уммӗн хӑй аҫисене хӑй патне ҫӗнтерсе вӗсенҫен:—«Кама мӗн кирлӗ: ӑс кирли, йе укҫа кирли?" тесе ыйтса пӗлет. Аслисем иккӗн ашшӗнҫен нумайрах укҫа ыйтса йулаҫҫӗ. Ҫи кӗҫӗн аҫи ӑс ыйтса йулаӗ. Ашшӗ вилсен кӗсем харкам хӑйшӗн уйрӑм пурӑна пуҫлаҫҫӗ. Укҫа ыйтса йулнисем ӑспа пурӑна пӗлмесӗр, мӗн пур укҫисене салатса пӗтерсе ҫисти ҫука йулаҫҫӗ. Ӑс ыйтса йулнӑ ывӑлӗ ӑспа пурӑнса, ҫукран пур пулса кайса халӗ те пулин пуйан пулса пурӑнаӗ, тет.

# 12.

## Патша çуртне вăрă йепле çакланнă.

Ёлĕк пĕр карҫăкпа пĕр старик пурăннă. Вĕсенĕн çамрăк ҫухне авлансанах аҫи-пăҫисем пĕртте лулман.. Ватăлмалăх кунĕнҫе мĕнтентĕр, карҫăкĕ хăй те пĕлмест, йывăр çын пулса, çуллен çул аҫа-пăҫа туса пара пуçлаӗ. Çиҫĕ аҫа тусан, аҫа тума ҫарăнаӗ. Çуралнă пĕр аҫисем пит аван ӳссе хире ĕçлеме кайа пуçлаççĕ. Кĕсем хирте пĕр лашапа çиҫҫĕн ĕçленине патша курсан, кĕсем патне çын йарса, вĕсем кам аҫисем иккенне ыйтса пĕлтерет. Лешсем епир çапла пĕр карҫăкпа пĕр старикĕн аҫисем пулатпăр, тесе каласа парӑççĕ. Унтан кĕсене патша патне илсе пыраççĕ те патша вĕсенҫен, ҫи аслинҫен: „есĕ мĕн йапала ĕçлеме вĕренесшĕн?“ тесе ыйтаӗ. Ку патшана хирĕç: „епĕ тимĕрçĕ ĕçне пĕлетĕп, урăх нийепле ĕçе те вĕренесшĕн мар“, тет. Тепĕр кун патша тепĕр ывăлĕнҫен ыйтаӗ. Вăл та ăна хирĕç: „пиҫҫе мана тимĕр йупа туса парĕ, епĕ çав йупа çине улăхса патшалăхра мĕн пулнине курса тăрса сана каласа парăп“, тет. Виççĕмĕш те хăйĕнҫен ыйтсан: «епĕ çĕрçухрăмран вĕçен кайăка пăшалпа персе тытатăп“, тет. Тăваттăмăшĕ:—„епĕ вĕçен кайăка вĕççе пынă ҫухне тытатăп“, тет. Пиллĕкмĕшĕ: „епĕ шывра çӳреме кимĕсем тума пĕлетĕп“, тет. Улттăмăшĕ: «Тунă кимĕ çинҫе ишме пĕлетĕп», тет. Çиҫҫĕмĕшĕ, ҫи йулашки ывăлĕ, унтан „есĕ мĕн тума пĕлетĕн?“ тесе ыйтсан,—„епĕ вăрлама анҫах пĕлетĕп“, тет. Патша шухăшлаӗ: „епĕ вăрра хам патăмра тытмăп“, тесе. Патша хăй çыннисемпе калаçсан лешсем: „пĕлме çук, патшалăхра

вăрă та кирлĕ пулĕ“, теççĕ. Патши кун ·патне çывăхарах пырса—„есĕ мĕн вăрлама пултаратăн?“ тесе ыйтаӑ. Ку патшана хирĕç:—„Епĕ пур йапалана та вăрлама пултаратăп, хушсан йут патша хĕрне те вăрлатăп“, тет. Ку сăмахсем патши кăмăлне пит килнĕ, ахаҙ те унăн вăл вăхăтра арăмĕ-мĕнĕ пулман. Ку çын ҙăнласах та малашне пире кирлĕ пулĕ тесе шухăшласа, çак вăрра та патша çуртне илҙĕç, тет.

## 13.

## Хуçа ывăлĕсенĕн шухăшĕ.

Пĕр хуçанăн икĕ ывăлĕ пулнă: пĕри асли, тепĕрри кĕçĕнни. Кĕсем иккĕшĕ те сутă тума шухăшлаççĕ. Епир йепле сут тăвар? тесен, кĕçĕнни калаӑ тет: «аӑа, тӳрĕрен сут тăвар», тесе. Асли: „çук, мĕн тума тӳрĕрен сут тăвар, аӑа улталаса сут тăвар, усси хамăра нумайтарах пулĕ», тет. Кайаççĕ кĕсем сут тума иккĕшĕ те йут патша çĕрне. Иккĕшĕ те таварĕсене тийеççĕ паршăсем çине, хайсемпе пĕрле сут тумашкăн темĕн ҙухлĕ çын илсе кайаççĕ шывпа. Пырсан-пырсан çул çинҙе кĕсенĕн ʻаслă праçник çитет. Çав праçник кун ишсе пынă çĕртен ҙарăнса пит хытă ĕçеççĕ-çийеççĕ, ӳсĕр те пулаççĕ. Хуçанăн кĕçĕн ывăлĕ те ĕçсе пит хытă ӳсĕрĕлет, нимĕн пĕлмест. Аслă ·пиҙҙĕшĕ, кăна, кĕçĕн шăллĕне, тӳрĕрен сут тăвас тенĕшĕн çиленсе ытти çыннисемпе тарçисемпе пĕр канашлă пулса, кăна ӳсĕрскере шыва пăрахтараӑ. Вăйлă çил тухса, шыв хумĕсем кăна шывăн

хĕррине хăйăр çине кăларса пăрахаççĕ. Лешсем паршисемпе шывпа ишсе кайаççĕ. Ку, мĕскĕн, çапла типĕ çĕре тухса ӳксен, кăна ăс кĕрет. Тăраҫ те пăхкалаҫ, йĕри-тавра никам та çук, хăй пĕр пĕҫҫенçи; йепле унта пырса çакланнине те пĕртте пĕлмест. Пăхкаласа тăрсан тытăнаҫ пĕр йенелле кайма. Кайсан-кайсан пĕр вăрмана тап-такăр йĕр кĕнине кураҫ. Çав йĕрпе кайаҫ-кайаҫ те пĕр пит пысăк йуман йывăçĕ ӳссе ларнипе кураҫ. Унăн йĕри-тавра тап-такăр, йĕтем пек, йĕр кураҫ. „Кунта çынсем пухăнаççĕтĕр, çавăнпа ку йĕр тап-такăр“, тет те çав йуман-çине улăхса лараҫ. Çĕрле çак йуман патне тĕрлĕ çĕртен пĕтес çук çынсем пухăна пуçлаççĕ, пăхăсăн, пурте вĕсем шуйтансем пулнă иккен. Пĕр уксах-ҫăлахĕ кайран çитнĕ, уксахран ҫас пырайман. Унтан пĕри, пуçлăхĕ: „есĕ мĕшĕн ҫас килеймерĕн?“ тесе ыйтаҫ, тет. Ку ăна хирĕç:—„Епĕ патша хĕрне асаплантартăм“, тет. Курăсăн, шуйтансем куллен хăйсем мĕн ĕç тунне йалан çапла каç кӳлĕм килне таврăнсан, хăйсенĕн ҫи аслă шуйтанне „епĕ çапла ĕç турăм“ тесе каласа параççĕ тет. Аслă шуйтанĕ ку уксах-ҫăлахĕнҫен: „йепле, патша хĕрĕ ҫĕрĕлмелле мар-и?“ тесе ыйтаҫ. „Ҫĕрĕлмелле мар“, тет ку. „Çапла-çапла авалхи ҫаплă хула вырăнҫе пĕр монастыр пур, çав монастыр айĕнҫе пĕр кĕнеке пур, кĕнекине çĕр айне алтса хунă, виçĕ тимĕр алăкпа питĕрнĕ. Авă çав кĕнекене илсе вуласан тин ҫĕрĕлĕ“, тет. Шуйтансем çапла каланине ку хуçа ывăлĕ йуман тăрринҫе итлесе лараҫ. Тул çутăлсан, леш шуйтанĕсем каллех тĕрлĕ тĕле саланса сирĕлсе пĕтсен, ку йуман çинҫен анса каллех пĕр йĕрпе малалла ута пуçлаҫ. Пырсан-пырсан вăрмантан та тухаҫ, тата темиçе кун утсан, пĕр патша пурăна-

кан хулана ҫитсе перӗнет. Ҭи хӗрринҭи наҭар ҫурта кӗрсе, унта пӗр ватӑ карҭӑкпа калаҫа пуҫлаҥ. Сӑмах майӗпе карҭӑк та кӑна: „ҫапла ҫапла пирӗн патша хӗрӗ пит ҭирлӗ выртаҥ, ыран-и, пайан-и вилес пек“, тесе каласа параҥ. Патша хӗрне ҭирлесе урнӑскере манастырте тимӗр тупӑкра тытса тӑраҫҫӗ, ахаљ нийепле те тытса ҭараймаҫҫӗ, тет. Ку, хуҫа ывӑлӗ патша ҫуртне курсан, патша ҫурҭӗ патне пыраҥ. Унта хурал тӑракан салтакӗ те кӑна патша хӗрӗ ҫапла пит ҭирли ҫинҭен каласа параҥ. Ку, хуҫа ывӑлӗ: „епӗ ӑна ҭӗртӗттӗм“, тесе каласа кӑтартаҥ. Вӑл ҫапла „епӗ ҭӗртӗттӗм“ тесе каласа парсан, ҭасах патшана хыпар ҫитереҫҫӗ. Унҭҭен те пулмасӑ, кӑна патша хӑй патне ҭӗнтерсе калаҫаҥ те ҭирлӗ хӗрне ҭӗртме хушаҥ. Ку вара темӗн ҭухлӗ салтаксем илсе кайса виҫ каҫра ҫав монастыр айне пытарнӑ кӗнекене алттарса илтерет те, тытӑнаҥ ҫав кӗнекене вулама. Вула пуҫласанах патша хӗрне утнӑкках пула пуҫлаҥ, ҭисти лӑпланаҥ. Тата вуласан ҭисти тӳрленсе ӗлӗкхи пек пит аван ҫын пулса тӑраҥ. Ҫав патша хӗрне ҭиртен ҭӗрӗлсен ашшӗ ҫак хуҫа ывӑлнех каҭҭа параҥ. Туйне пит вӑйлӑ тӑваҫҫӗ, ӗҫсе-ҫисе купӑссем, кӗслесем, сӑрнайсем, каласа савӑнса ташлаҫҫӗ. Туй иртсен, патша хӑй кӗрӳшне ҭасах хӑй пурӑнакан хулине хула пуҫлӑхӗ туса хураҥ. Сут тӑвакансем тӳрӗрен сут тӑваҫҫӗ-и? тесе вӗсене пӑхтараҥ. Ҫак хулана патша кӗрӳшийӗн пиҭҭӗш те хӗрӗх лавкапа сут тума пыраҥ. Тӗрӗс сут туманшӑн ку хӑй пиҭҭӗшне ҭасах тӗрмене хуптарса та хураҥ. Ҫапла тӗрмене хупса хунӑ ҫӗртен кӑна хӑй патне ҭӗнтерсе халлап калама хушаҥ. Ку „епӗ халлап таврашне пӗртте пӗлместӗп“, тет. Унтан вара шӑллӗ, патша кӗрӳш пулнӑскер, тытӑнаҥ хӑй

халлап йама. „Пĕр хуçанăн икĕ ывăлĕ пулнă, асли усси нумайтарах пултăр тесе улталаса сут тума йуратнă, кĕçĕнни тӳрĕрен сут тăвасшăн пулнă. Асли çавăншăн кĕçĕн шăллĕне çиленсе шыва пăрахтарнă, хăй унăн таварĕсемпе сут тума тытăннă“, тет. Йулашкинҫен вара хăйне паллаттарнă.... „Есĕ ку вырăна йепле кĕтĕн?“ тесе ыйтаĭ пиҫҫĕшĕ. „Епĕ çав вăрманта пысăк йуман куртăм çавăн çине улăхса тăрса çынсем аркăпа укçа тултарнине куртăм. Ҳайсем кайсан, çав укçисене илсе çак вырăна кĕтĕм“, тет. Пиҫҫĕшĕ темĕн тĕрлĕ савăнаĭ: „манăн та унта кайасҫĕ?“ тет. „Кай!“ тет ку та. Пиҫҫĕшĕ ҫасах çав кăтартса йанă çулпа тухса вăрмана утаĭ. Темиçе кун утсан, хай вăрмана та пырса кĕрет. Йумана та шыраса тупаĭ. Тĕттĕм пулас умшĕн йуман çине те улăхса лараĭ. Çĕрле леш шуйтанĕсем çын пулса каллех пухăна пуçларĕç, тет. Пурте пухăнсан, ҫи йулашкинҫен уксахҫăлахĕ те пырса çитрĕ тет.—„Мĕшĕн есĕ пит кайа йултăн?“ тесе ыйтаĭ тет пуçлăхĕ, ыттисенҫен пит кайа йулнăран çиленсе. „Есĕ ĕлĕк те çапла патша хĕрне асаплантаратăп, тесе мухтанаттăн, курăсăн, вăл çапах та ҫĕрĕлҫĕ“, тет. Ку та ăна хирĕç: „Ун ҫухне епĕ каланă вăхăтра çакăнта çӳлте йуман тăрринҫе пĕр çын пулнă иккен“, тет çӳлелле пăхкаласа. „Кунта халĕ те çын пур мар-и?“.. тесе уксах-ҫăлахĕ ҫипертерех çӳлелелле пăхкала пуçлаĭ. Ыттисем тĕпĕр-тепĕр улăхса кайса пăхаççĕ те хай унта ларакан çынна кăпăр-капăр çĕре сĕтĕрсе антарса пĕтĕмпе таткаласа пăрахаççĕ, тет. Кайран вара унăн пур йапалисене те шăллĕ хăйне илсе халĕ те пулин пуйан пурăнаĭ, тет.

## 14.

## Кусатăран тăвакансем.

Виçĕ арçын пĕрле пурăннă. Вĕсенҫен асли пĕр амаран çуралнă, кайранхисем иккĕш тепĕр амаран. Асли ĕçе пит ĕçҫен пулнă, кирек хăçан та ĕçе пикенсе (тимлесе) ĕçленĕ. Кĕçĕннисем иккĕшĕ те пит йулхав та наҫар çынсем пулнă. Виççĕшĕ те вĕсем кусатăрансем (урапасем) ĕçлесе пурăннă. Асли пĕҫҫен вунă кусатăран тунă çĕре кĕсем, кĕçĕннисем иккĕш, аран-аран вунă кусатăран тунă. Асли ĕçе çапла пит хытă пахасăр ĕçленине курсан, кĕсем çамрăккисем, найансем, аслă питҫĕшне курайми те пулаççĕ. Пĕре çапла хăй килте çук ҫухне унăн туса хунă кусатăранĕсене кĕçĕннисем вут тĕртсе çунтарса йараççĕ. Лешĕ киле таврăнсан, «санăн кусатăранăсем çунса кайрĕç», тесе каласа параççĕ. Ҫăнах çунса кайнине каласа ĕнентересшĕн кусатăранĕсенҫен кăмăрăксем анҫах, йулнине кăтартаççĕ. Ку асли нимĕн тума пĕлмесĕр, илҫĕ тет пĕр хутаç та кирли кăмăрăкĕсене пуçтарса хутаçҫа тултара пуçларĕ тет.

— «Вăл кăмăрăксемпе мĕн тăвас тетĕн?» тесе ыйтаççĕ, тет лешсем.

— «Мĕн тăвасси мĕнĕ, пасара илсе кайса сутса укçа тăвăп», тет ку. Хайхи кăмăрăкĕсене сутма пасара кайаť. Çул çинҫе пĕр хăваттире çĕр выртма кĕрет.—«Ăçта кайатăн?» тесе ыйтсан, «епĕ пит хаклă йапала илсе кайатăп», тет.—«Анҫах ку манăн ăлаври йапалана вăрă-хурахсем илсе ан кайҫҫăр-ҫĕ, ҫипертерех çĕрле партса хуралтине çăраççипе питĕрсе илесҫĕ?» тет.

— „Йурĕ“, теççĕ лешсем те. Анпар айне лартса хапхине тул йенҫен çăраççипе питĕрсе илеççĕ, уççине кăна параççĕ.

— «Уççине хăр çумăра илĕр, епĕ сиртен хăрамастăп, сирĕн çийе шанатăп», тет ку.

Апла каласан лешсем анпар айĕ çăраççийĕн уççине хăйсем çумне илеççĕ. Вĕсем патĕнҫе çапла выртса çĕр каççан,,ирхине кайма тесе тула тухаҫ̆. Йепле таварне хуçисем кăтартма хушаççĕ. Ку та кăтартма пулса анпа райĕ хапхи çăраççине уççан, ăлавĕнҫи хутаçне кăтартма пуçлаҫ̆. Пăхăсăн, хутаççинҫе кăмăрăксем анҫах тултарса хунине курсан, ку хăй те ăна кăна пĕрт те пĕлмен пек пулса, шарт! тĕлĕнет.

— «Есир кунта манăн хаклă тавар вырăнне мĕн тултарса хутăр?»... тесе ыйтаҫ̆. Лешсем те: „Епир нимĕн те тултарса хумарăмăр, ху çав кăмăрăксене тултарса килтĕн пулĕ?!“ теççĕ тĕлĕнсе.

— Çук, манăн унта хаклă таварсем-ҫĕ, есир вĕсене илсе унта кăмăрăксем тултарса хутăр»... тет кутăнлашса калаçса. кĕсем те: „çук, епир санăн таварна тивмерĕмĕр, илмерĕмĕр“, тесе калаçса хăра йулаççĕ.

— «Есир кунта манăн тавара çĕрле, епĕ çывăрнă вăхăтра вăрласа кăмăрăксем тултарса хутăр иккен?!» тесе тата питĕрех çыпçăнаҫ̆. Лешсем те шарт! тĕлĕнеççĕ. „Епир санăн йапалусене илмерĕмĕр», тесе тупа тăваççĕ, мĕн тăваççĕ. Ку çапах та вĕсене шанман пек пулса:

— «Есир хăр патра хăваттире кĕнĕ çынсенĕн таварĕсене çапла çарататтăр иккен?? Епĕ сирĕн çийе сута хуратăп», тесе кăшкăраша пуçлаҫ̆. Хуçи те хăра йулса: «тархашшăн сута ан хур, есĕ пире кăлăхах пĕтеретĕн, тĕрмене хуптарса

хуртаратӑн, аҫам пӑҫамсене шелле, тархашшӑн ан сутлаш епир апла ҫынсем мар, тархашшӑн каҫар?»... тесе йӑлӑна пуҫлаҫ.

— Есир ҫын йапалисене вӑрлатӑр та сирех каҫар иккен?!.. Ан хуптар!“ тесе йӑлӑнатӑр“, тет.—„Манӑн таварӑм виҫӗ ҫӗр тенкӗ тӑраҫ-ҫӗ, виҫӗ ҫӗр тенкӗ тӳлесен епӗ тин каҫарӑп, сирӗн ҫийе сута хумӑп“, тет. Лешсем, мӗскӗнсем, нимӗн тума пӗлмесӗр, аптӑранӑ йенне шухӑшлама тытӑнаҫҫӗ: „ун ҫухлӗ укҫана епир ӑҫтан шыраса тупӑпӑр?“ тесе. „Кирек ӑҫтан тупӑр“ тет хӑй унӑҫемӗн хыпалантара пуҫлаҫ. „Епӗ старостана кайса калатӑп“, тет.

— „Тархашшӑн ан кай, пирӗн ҫийе сута мӗне ан хур, епир пӗре хут санӑн таваршӑн йепле те пулин укҫа тӳлӗпӗр“, теҫҫӗ. Тытӑнаҫҫӗ унтан кунтан ҫупкаласа шырама. Виҫӗ ҫӗр тенкӗ шыраса тупсан, кӑна тыттараҫҫӗ. Кунӑн аллине ҫапла виҫӗ ҫӗр тенкӗ улталаса илнӗ укҫа ҫаклансан, лашине кӳлсе килне таврӑнаҫ. Шӑллӗсем кунтан ыйтаҫҫӗ: «йепле, кӑмӑрӑкӑсене сутса пӗтертӗне?» тесе. „Пӗтертӗм“ тет ку та.

— «Нумай укҫа турӑна?» тесе ыйтаҫҫӗ каллех.

— «Акӑ мӗн ҫухлӗ», тет аллинҫи виҫӗ ҫӗр тенкине кӑтартса. Лешсем те ку ҫапла кӑмӑрӑк сутса нумай укҫа тунине курсан, шухӑшла пуҫлаҫҫӗ; „аҫӑр епир те хамӑр куса-тӑрансене ҫунтарса йарса, кӑмӑрӑкӗсене ҫапла сутса укҫа тӑвар?» тесе. Нумай та шухӑшламаҫҫӗ, хай тунӑ куса-тӑранӗсене ҫасах ҫунтарса сивӗннӗ кӑмӑрӑкӗсене хутаҫпа тийесе, пасара хакла сутма-кайаҫҫӗ. Пасара ҫитсен:—,,куса-тӑран кӑмӑрӑкӗсем сутатпӑр, илетре?‘‘... тесе кӑшкӑрса ҫӳреҫҫӗ. Пӑхӑсӑн, кӗсенӗн кӑмӑрӑкӗсене хакла мар, йӳне илес

текен те никам та çук, пĕри-пĕр ăлавĕ натне пырса пăхакан çук.—„Лешĕ пирĕн йепле пит хакла сутса таврăнҫĕ-ши?“ тесе шарт тĕлĕнеççĕ. Нимĕн тума пĕлмесĕр, кăмăрăкĕсене киле илсе таврăнсан, çиллипе ку аслийĕн амăшне мунҫа хуттарса, сĕрĕмлĕ мунҫана хупса хурса, сĕрĕм тивтерсе вĕлерттереççĕ. Пиҫҫĕшийĕн амăшне çапла вĕлерсен, вăл киле таврăнсан: «санăн анӳ мунҫара сĕрĕмпе вилҫĕ», тесе каласа пара ççĕ. Ку нимĕн тума пĕлмесĕр, аптăраса йĕре-йĕре пĕтес çук куç-çуллисене тăкаӳ. Çапла пайтахҫен йĕркелесен, хăй вилнĕ амăшне ҫĕркесе çуна çинè вырттараӳ.—Мĕн тăватăн?» теççĕ шăллĕсем кунтан.—«Аçта илсе кайатăн?» тесе ыйтаççĕ лешсем те пĕлесшĕн пулса.—Мĕн те пулин тăвăп, спрĕн ĕç çук!» тет кĕсене хирĕç.

Ирхĕне тăрса, лашине кӳлсе, вилнĕ амăшне илсе кайаӳ. Пырсан-пырсан инçе кайсан, каç та пулсан, пĕр йала пĕр çын патне çывăрça çĕр kaçма хăваттире кĕресшĕн пулса ыйтса пĕлет «çĕр выртма хăваттире йарăрҫĕ?» тесе.

— «Есир йеплескерсем пулатăр? тесе кунтан ыйтса пĕлеççĕ.

— «Епир ҫипер çынсем, аннепе çул кайаттăмăр», тет.

— «Кĕрĕр», теççĕ лешсем те кĕсене, çул кайакан çынсене шеллесе.

— «Анӳ ăçта?» тесе ыйтаççĕ.

— «Анне манăн çуна çинҫе лараӳ», тет.

— «Çул килсе вăл шăнҫĕ пулĕ, ăна ҫасрах пӳрте илсе кĕрсе ăшăтар», тесе ҫĕнсе кĕмешкĕн çемйисем хыпаланса тула тухса кайаççĕ. Ку хăй вăл вăхăтра пӳртрен тухаймасăр калаçса йулаӳ.

Лешсем кунăн амăшне: «аӳа, тăр, сиве шăнтăн пулĕ, ҫасрах пӳрте кĕр?» тесе ҫĕне пуçлаççĕ. Ку, вилнĕскер, шанк

хытса кайнӑ йапала, ҫуна тӗпӗнҫе пӗр сиккелемесӗр, ҫӗнмесӗр ларайӗ. «Ку ватӑскер-и вара? епир ҫӗннине илтмерӗ курнайӗ, пӗрте хускаламасӗ-ҫке!» тесе тата тепӗр хут та ҫӗне пуҫ лаҫҫӗ. Лешӗ вилнӗскер пин хут ҫӗнсен те ҫӗнес ҫук йапала, ку ҫулӗ те пӗр ҫӗнмесӗр лара парайӗ. Кӗсем сасӑ ҫӗвӗ илтӗнмесен, «ку ахал мартӑр, вилнӗ пулӗ», тесе аллисемпе те тыткаласа пӑхаҫҫӗ. Курӑсӑн, шанк! хытса кайнине курсан, «кунӑн амӑшӗ шӑнса вилнӗ пулӗ», тесе ҫасрах пӳрте кӗрсе кӑна:—«санӑн аннӳ ҫуна ҫинҫе вилсе ларайӗ-ҫке?»—тесе пӳрте кӗрсе каласа параҫҫӗ. Ку та ӑна кӑна пӗртте пӗлмен пек пулса, кутӑнласа:—«манӑн анне халӗ кӑна епӗ кунта, сирӗн патра хваттир ыйтма кӗнӗ ҫухне, сывӑҫӗ, есир ӑна вӗлерсе пӑрахрӑр пулӗ?»... тесе ҫыпҫӑна пӳҫлайӗ. Хыпаланса тула тухса кайайӗ те амӑшне:—«анне, анне?» тесе пӗр икӗ тапхӑр ҫӗне пуҫлайӗ. Хӑйне хирӗҫ сасӑ-ҫӗвӗ илтӗнмесен, тытӑнайӗ ҫипертерех тыткаласа пӑхма. «Кӑна вара ҫӑнласах та вӗлерсе пӑрахнӑ-ҫке!.. Халӗ кӑна сывҫӗ, кӑна есир вӗлертӗр?».. тесе кил хуҫине ҫемйисемпе ҫыпҫӑна пуҫлайӗ.

— „Ҫук“, теҫҫӗ лешсем те.—«Епир вӗлермерӗмӗр», теҫҫӗ хӑйсем ҫине йӑвантарнине кура.

— «Есир вӗлермесен, кам вӗлерсе, епӗ халӗ кӑна сирӗн патра кӗнӗ ҫухне вӑл сывҫӗ. Хам сирӗн пӳртрен тухаҫҫен есир ӑна вӗлерсе пӑрахма та ӗлкӗртӗр?»... тет акӑраша (ҫӑкӑрашса).

— «Санӑн аннӳне епир тивмерӗмӗр, вӑл хӑй шӑнса вилнӗтӗр», теҫҫӗ лешсем те нимӗн калама аптӑраса.

— Сиртен пуҫне кам ӑна вӗлертӗр? Темӗн каласан та есир ӑна вӗлерсе пӑрахрӑр?!... Епӗ сирӗн ҫийе ку ӗҫе. сута хуратӑп», тесе тата хытӑрах акӑраша пуҫлайӗ. Лешсем те хӑранипе нимӗн тӑва пӗлмеҫҫӗ:

— «Епир вĕлермерĕмĕр», тесе анҫах тăраççĕ. Пит çыпçăна пуçласан, кил хуçи хăранипе нимĕн тăва, нимĕн калама пĕлмесĕр, тархашшăн пирĕн çийе сута ан хур епир ҫипер çынсем, пире сут тавраше пит хăрушă йапала, епир халиҫҫен çынпа сутлашса çӳремен çынсем», тесе йăлăна пуçлаççĕ. Ку унĕ çемĕн кĕсем çине: «е—е—е! есир çапла çынсем иккен, манăн аннене вĕлертĕр те уна та «епир вĕлермĕрмĕр», тесе туна пуçларăр. Хăр патра çывăрма кĕрекен çынсене есир çапла çырлахтаратăр иккен?!. Кунтан, пăртак тăрсан, мана та çапла вĕлерсе пăрахăттăр?» тет акăрашса. Хăй унĕçемĕн кил хуçине çыпçăна пуçлаӗ, çухаран йарса тытаӗ...

— «Тархашшăн пире ан айăпла, ку ĕçре епир айăплă çынсем мар, кам айăплине епир пĕлместпĕр, тет.

— «Есир вĕлермерĕр пулсан, вăл манăн ҫĕрĕ пулĕ-ҫҫĕ», тет ку та теветкелĕ кăна калаçса.

Темĕнҫен çапла картишĕнҫе харкашса; тавлашса, калаçса тăрсан:—епĕ халех староста патне кайса есир çапла манăн аннене вĕлернине каласа паратăп. Ыранах кунта тӳре-шарана ҫĕнтерттеретĕп! Есир иккен кунта çын пуçĕсене нимĕне хумастăр. Тӳресем сире çынна вĕлернĕшĕн йепле тумаллине, ăçта йамаллине пĕлĕç», тет хапхинҫен тухма пуçласа. Лешсем унĕçемĕн, хăраса мĕскĕнсем, нимĕн тума пĕлмесĕр йăлăна пуçлаççĕ:—«тархашшăн ан кайа хур, есĕ пире тĕрмере çĕртсе пĕтеретĕн?... Ыттах пире айăплă тетĕн пулсан, епир сана ун выранне, вилнĕ çын выранне икĕ ҫĕрĕ çын парăпăр»... тийе пуçлаӗ, кил хуçийĕ нимĕн калама пĕлмесĕр.

Апла каласан ку та пăртакçĕ лăпланам пек пулаӗ, калле те ҫакаӗ.

— «Икĕ ђĕрĕ çын паратăн пулсан, кайса калатăп eпpин», тет çемçереххĕн калаçса.

Калаçсан-калаçсан хай кил хуçийĕ хăйĕн ђи малтан çак вилнĕ çынна тухса куракан хĕрĕсене çак çынна хăйне суга мĕне ан хутăр, тесе йĕрет те пулин тыттарса лартса йарaĭ. Хĕрĕсем те темĕн тĕрлĕ йĕреççĕ. Ку вĕсене хирĕç йăпатса: «ан йĕрĕр мĕн тума йĕретĕр? Епĕ сире вĕлермĕп вĕт. Епĕ сире йуратса анђах пурăнăп, хăшра анне вырăнне, хăшне арăм вырăнне», тет—(йăпатаĭ). Хĕрĕсене лартаĭ та хăйпе пĕрле ку çапла килне амăшĕ вырăнне икĕ хĕр-арăм лартса таврăнсан, лешсем те шарт! тĕлĕнеççĕ. Ахаљ те хăйсене иккĕшне те арăм кирлĕскерсем. Пĕрре çапла пĕр çĕре пухăнса иккĕшĕ вăрттăн калаçаççĕ: „аĭа епир те хамăр аннене çапла вĕлерсе пасара илсе кайса сутса, хамăр валли çапла арăмсем лартса килер?“... теççĕ, Нумай та шухăшламаççĕ хайхисем иккĕшĕ те çапла амăшне вĕлерме пĕр канашлă пулсан, мунђа хутса амăшне сĕрĕм тиверсе вĕлереççĕ те ăна пасара сутма илсе тухаççĕ. Пасарваррине çитсен: „вилнĕ çынна ђĕрĕ çынсемпе улăштаратпăр!“... тесе кăшкăра пуçлаççĕ. Кĕсем çапла вилнĕ çынна амăшне пасара ђĕрĕ çынсемпе улăштарма тухнине илтсен, кĕсене ђасах иккĕшне те тытса тĕрмене хупса хураççĕ. Пăхăсăн, çавсем халĕ те пулин тĕрмере лараççĕ, тет.

## 15.

## Çынна çийекен пăру.

Пĕр ватă салтак çирĕм пилĕк çул салтакра слушит туса килнелле таврăнаĭ. Кĕпи йĕмĕсем уринђи сăран, аттисем

çулпа темиçе уйăх çуран утса пырса пĕтĕмпе çĕтĕлсе пĕтнĕ. Çанталăк та сивĕ йенелле кайнă:—„Ех“, тет салтак, „ку аттăмсемпе епĕ йепле малалла кайăп-ши?» Киле çитеймесĕр çул çинҫе шăнса вилĕп-и, мĕн-и?“ тесе хуйхăрса утса пырать. Хĕлле те пулҫĕ, тет; ку, ватă мĕскĕн, салтак çĕтĕк кĕпе йĕмсемпе çĕтĕк аттисемпе çул тăрăх çав лакăштатса утса пырать, тет. Çапла çулпа утса пынă ҫухне ку пăр урлă каçнă вăхăтра вакка пĕр çынна пуçхĕрлĕ ҫиксе хунине курсан, астăвать: унăн урисем çўлелле тăратса тăраççĕ. Урисене тăхăннă аттисем вĕр çĕнĕ пулнă. Ку ун патне пырса ҫипертерех астăвать. Пăхăсăн, çыннийĕн пуçĕмĕнĕ курăнмасть вакра. Вакки шăннă. Ку пăхса тăрать тăрать те „ай—хай“, тет. „Ку çыннăн аттисем питĕ вĕр çĕнĕ йапала пек, кăна хывса илсе тăхăнсан, питĕрех те аван пулĕҫĕ, йурĕҫĕ. Кунăн аттисем ман урана ҫух кăна пулмалла“, тесе пăхкалаЛ. Нумай та çапла пăхкаласа туса тăмасть, тытăнать хай вакра тирĕнсе тăракан çыннăн аттине хывса илме. Туртать, туртать хай вилнĕ çын аттине урисенҫен нийепле те хывса илеймест. Пăрахса хăварма та шеллет, мана пурĕ пĕр атă кирлĕ, сутăн илме манăн укçам-мĕнĕм çук, тĕл пулнă ҫухне йепле те пулин хывса илме тăрăшам халĕ, тесе тытăнать хытăрах хывкалама. Туртать, туртать нийепле те аттисене туртса кăлараймасть, „ҫим халĕ“, тет. «Епĕ кунăн урисене атти-мĕнĕпеле хуççа илем, кайран пĕр-пĕр çĕрте хăваттирте ăшăтсан, урисене кăлара кăлара пăрахăп“, тет. Тытăнать хай тăратса тăракан çын урисене шăннăскере аттимĕнĕсемпе ҫăркуççи таран хуççа илме. Малтан пĕр урине шартлаттарса хуççа илет, кайран тепĕр урине те. Икĕ урине те çапла ҫăркуççи таран хуçа-хуçа илсен, ку ватă салтак çав çыннăн атăлă урисене пĕр çĕре çыхса, çурăм çине çакать те тытăнать

çул тăрăх каллех малалла утма. Тĕттĕм пулас уммĕн пĕр йал патне çитсе пырать. „Ку йалта епĕ çывăрăп“, тет. Йалне ђисти çитсен хĕррингђи пĕр нађар пӳрт ђӳређи патне пырса ђӳређинђен; „мана çывăрма хăваттире йарăрђĕ?“ тесе ыйтать ђӳређе витĕр кил хуçинђен.

— „Есĕ мĕскерлескер? Кам пулатăн?“ тесе ыйтать ђӳређе витĕр шал йенђен пĕр карђăк.

— Кам пуласси мĕнĕ епĕ ватă салтак, служпаран киле таврăнаттăм», тет ку та ăна хирĕç, нађар кăна сассипе. Карђăкĕ каллех.—«Епĕ сана йарăттăм—та хăратăп, епĕ пĕтђен çын. Есĕ кӳрше кайса пăх, вĕсем çемйелĕ çынсем, хăраса туса тăмĕç, сана çывăрма йарĕç“, тет. Апла каласан, ку карђăк пӳрт ђуређи умĕнђен хăпса кайать, кӳрши ђӳређи патне. Ђӳређи умне çитсен, каллех ђӳређе витĕр пăхать, ђăнласах та кĕсенĕн пӳрђĕ ăшĕнђе пĕтес çук çын курăнать. Ђӳређе витĕр тытăнать пӳрнисемпе кăшт шăкăртаттарма. Лешшем те пӳртре шăкăртаттарнине илтсен.

— „Мĕн кирлĕ?“ тесе ђӳређе витĕр кăшкăрса ыйтаççĕ.

— „Мана çывăрма хăваттире йарăрђĕ?“ тесе ыйтать ку та.

— „Есĕ кам?“ тесе ыйтаççĕ каллех.

— „Епĕ çапла, çапла çын“. тесе каласа парать ку та.

— „Епир сана çывăрма йарăттăмăр та, анђах пирĕн пӳрт пит тăвăр, çын нумай, ниçта выртса çĕр каçмали çук. Сана çул килнĕ çынна пит кансĕр пулĕ, канса выртма та памĕç; есĕ акă кӳршĕрен ыйтса пăхăсăнђĕ, унта пĕр карђăк анђах. Вăл сана çывăрма йарĕ“, теççĕ. Апла каласан ку, мĕскĕн, каллех кĕсенĕн ђӳређи кутĕнђен кайса татах леш паçăрхи карђăк пӳрђĕ патне пырать та—„тархашшăн çывăрма йарăр-

ҫӗ, мана, ватӑ ҫынна урамра шӑнса вилме ан хушӑр ӗнтӗ“, тесе ҫӳреҫе витӗр йӑлӑна пуҫлаҫ.

— «Лешсем сана мӗн каларӗҫ?» тесе карҫӑкӗ каллех кунтан ыйтса пӗлет.

— „Мӗн каласси мӗнӗ, пирӗн ҫемйе йышлӑ, пӳрт тӑвӑр, ниҫта вырттарма ҫук терӗҫ“, тет.

Карҫӑкӗ те кӑна шеллесе:—«пӗр хут кӗр еппин», тет Апла каласан, ку старикӗ те йеррипенӗн кӑна кӑштӑртатса пӳрте кӗҫӗ тет ге: «сыв пурӑнатра?» тесе кунтан пурӑнӑҫ ҫинҫен ыйтрӗ, тет.

— «Пурӑнасси мӗнӗ, пӗр майлӑ вилеймесӗр пӗр пӗт ҫен ҫав пурӑнатӑп халӗ тет карҫӑкӗ те.

— «Пурӑнсан йураҫ ӗнтӗ» тет ку та ӑна хирӗҫ. Хӑй ҫав вӑхӑтра ҫийӗнҫи хутаҫҫисене ҫӳлелле пӑрӑс (кашта) ҫинелле хывса хураҫ. Кӑвак сӑхманне хывса, сак ҫине хурса, ҫине улӑхса лараҫ.

— «Есӗ капла айакран таврӑнатна?»... тесе ыйтаҫ карҫӑкӗ ватӑ салтакран.

— „Айакран, акӑ ӗнтӗ нӗр ҫарӑнмасӑр пилӗк ултӑ уйӑх утатӑп», тет.

— «Килне ҫас ҫитмелле-и?»

— «Хӑҫан ҫитессине те пӗлместӗп, те ҫитейӗп темӗн?! тет: ку та.

— «Мӗшӗн апла?»

— «Мӗшӗнӗ мӗнӗ, миҫе уйӑх килтӗм тата темиҫе уйӑх утмалла. Ута-ута халӗ те ҫисти кӗлккӗ пултӑм, сӳпрӑм. Ҫамрӑк ҫухнехи мар, пит хӗнпе ута пуҫларӑм», тет салтакӗ хуйхӑрса.

— Турă сывлăх парсан çитĕн-çке!“ тет ку та ăна йăпатса.—«Килелле утнă ђухне çапах савăнса хытăрах утатăн пулĕ?» тет.

— „Утни-мĕнĕ пирĕн ватă çыннăн паллă хур пек пĕр вырăнта тек таптаса тăратăн тет. Пайтахђен çапла калаçса ларсан, карђăкĕ кăна каçхи апат та тутарай. Çывăрма вăхăт çитсен: «есĕ, салтак, ăçта, кăмака çинђе ăшă çĕрте выртса çывăрăна?» тесе ыйтай.

— «Унта мана пит вĕри пулĕ, епĕ кунта акă сак çине вырăн сарса выртăп» тет ку.

— «Карђăк, есĕ пăруна леререх кăкар, епĕ хама çисе йарасран хăратăп», тет салтакĕ.

— «Пăру етеме çисе тăмĕ ĕнтĕ, кăлăхах ан калаç», тет карђăкĕ те кулса.

— «Апла ан кала«, тет салтакĕ те, «Епĕ тăнă çĕртэ пĕр пăру салтака ђисти çисе йађĕ», тет.

— «Пирĕн пăру тивмест», тет карђăкĕ.

— «Тивмесен те леррех кăкар», тет.

— «Хăратăн пулсен, епĕ ăна пăртакçĕ тĕпелерех кăкарса хурăп», тет те ђасах карђăк пăрушне салтака çитиçитми кăкарса хурай.

Çывăрма выртсанах ку, салтакĕ, хăрăлтатса çывăра пуçлай.

— «Авă, мĕскĕн, çул килсе йепле ывăннă курнай, выртнă-выртманах çывăрса кайса хăрăлтаттара пуçларĕ», тет карђăкĕ салтака шеллесе.

Пăртакçă çаврăнкаласа выртсан карђăкĕ те тутлă ăйхăпа çывăрса кайай.

Салтакĕ ирхине ирех тăрсан, хай сăран атă ăшĕнҫен, ҫын урисене ăшăнса ҫемҫенсен, кăлара-кăлара урайне пăрахаҫ те ҫак аттисене питтисене хăй тăхăнса йараҫ. Кивĕ аттисене ҫĕтĕккисене сак айне кăш пăрахаҫ. Карҫăкĕ кăмака ҫинҫен ҫыврса тăриҫҫен, ку салтакĕ, тумланса, хай карҫăк килĕнҫен ăна вăратмасăр, каламасăр, тумасăр тухса кайаҫ те кирли ҫул тăрăх килнелле ута пуҫлаҫ. Ирхине карҫăкĕ те вăранса тăрсан, пăхкалаҫ. Ку вара хам патма кĕрсе выртнă салтакăм ăҫта кайрĕ?» тесе вăл выртнă сак ҫине пăхкалаҫ. Никам та ҫукне курсан, урайне те пăхкалаҫ. Хай атă ăшĕнҫен вилнĕ ҫын урисене кăларса пăрахнине курсан, салтакăн ҫĕтĕк сăран атти те сак айĕнҫе выртнине курсан, хăра йулаҫ: «Ҫĕркĕ салтак пĕр ҫынна пăру ҫисе йанăтенине асне илсе. Кăна вара пăру ҫисе йаҫĕ пулĕ?» тет. Унҫҫен те пулмарĕ, урама ҫупса тухса ҫынсене: «манăн пӳртри пăрăвăм хам патма ҫĕр выртма кĕнĕ салтака ҫисе йаҫĕ», тесе каласа параҫ. Лешсем те шарт тĕлĕнеҫҫĕ. Ҫын ҫийекен пăруран хăра йулаҫҫĕ. Карҫăкĕ те: «аҫăр халĕ ман патма пырса кĕрĕр? Урисем урайĕнҫе выртаҫҫĕ», тесе курма ҫĕнет. Лешсем пырса пăхма хăраҫҫĕ. Ку карҫăк пӳрҫĕ патне пĕтес ҫук пухăнсан, ерттилпе ку карҫăк пӳрҫийĕн ҫӳреҫи витĕр хай ҫын ҫийекен пăрăва астăваҫҫĕ. Пăрушĕ те халиҫҫен хай карҫăкĕпе кăна иккĕн пурăнаканскйр, ҫынсем ҫапла ҫӳреҫе витĕр пăха пуҫласан, хăраса: «мук!» тет хулăн сассипе кăшкăрса тытăнаҫ сиккелеме. Кусем те вăл ҫапла хытă мĕкĕрсе кăшкăрнине илтсен, хăраҫҫĕ. Ăнсăртран тухса кайсан тусан хамăра ҫисе йарĕ», тесе шухăшлаҫҫĕ: «аҫăр - ха, вăл пăрăва вĕлерер?»... теҫҫĕ. Никам та пӳрте кĕрсе ăна вĕлерейместь. Пурте хăранăран тата «аҫăр пӳртне ҫунтарса

йарар, унта вăл та çунса кайĕ», теççĕ. Хăшĕ апла каласан каллех хăраççĕ. Вуттăн алли вăрăм, пĕр тухсан ытти çуртсене те йарса илĕ» теççĕ. Çав вăхăтра çынсем çапла урамра пухăнса калаçнине курсан, йала йуналутца пырса кĕнĕ улпут —«унта мĕн пăхаççĕ?» тесе ыйтса пĕлет. Йал çыннисем: —«пĕр карçăкăн пÿртри пăрушĕ кĕрсе выртнă салтака çисе йанă», тесе каласа параççĕ. Ку та ăна вĕлерме кирлĕ», тет. —«Пĕри-пĕр вĕлерме пыракан çын çук», тесе каласа параççĕ.

— «Йепле йалта пĕр теветкелĕ (хăйулă) çын çук пулĕ?... Сирĕн салтаксем мĕнсем пуртăр, вĕсем теветкелĕ çынсем, пăрăва мар ашшĕпе амăшне вĕлерсе тухĕç», тет. Ку çапла каласан пĕр салтак хăй теветкелĕхне йал çыннисене кăтартасшăн: —«кÿрĕр-ха мана хĕçĕре? епĕ ăна хĕçпе касса тухăп», тет улпутне. Лешĕ хĕçне парсан, салтакĕ йеррипе кăна пÿрте кĕрет те хĕçне икĕ аллипе те тытса çÿлелле çĕклесе мĕн пур вăйĕпе персе пăру мăйне касса татасшăн, хĕçĕпе сăптăраť те, хĕç вĕçĕ сентĕре каштине тивсе çĕмĕрлсе кайаť те тытки çумне йулнă хĕç татăкĕпе пăру пăйавне касса татаť. Пăрушĕ те хăраса «мÿк» тесе кашкăрса, кăпăр-капăр пÿртрен салтака тĕртсе ÿкерсе тула, урама тухса кайаť. Хай çынсем çын çийекен пăру пÿртрен сиксе тухнине курсан, пурте «хама тытса ан çитĕр», тесе хăраса тĕрлĕ йенелле пĕтĕм вăйĕпе тара пуçлаççĕ. Улпуçĕ те йуналутпаскер çынсем тарнине курсан, лашине пĕтĕм вăйĕпе хăваласа тара пуçлаť. Хай пăрушĕ çынсем хыççăн çупкаласан, кирли улпут лаши хыççăн хÿрине тăратса пĕтĕм вăйĕпе сиксе пыра пуçлаť. Çынсем кăшкăрашнăран, улпуçĕ хыçалалла çавăрăнса пăхсан, хай çынна çийекен пăру хăй хыçĕнçен пĕтĕм вăйĕпе пынине курсан, кирли хăй лашине тата хытă сиккипе хăвалама. Хытă

пынӑ ҫухне лаши ӑнсӑртран такӑнса ҫикеленҫӗ кайрӗ, тет. Ун ҫинҫе утланса ларса пыракан улпуҫӗ те лашинҫен малалла ҫикеленсе пыра пуҫларӗ, тет. Пӑрӑвӗ те улпуҫӗ умӗнҫен тата хытӑ мук! тесе хулӑн сассипе мӗкӗрсе илсен, малалла пӗр ҫарӑнмасӑр сике пуҫларӗ, тет. Улпуҫӗ те хӑйне тивменнине курсан, ҫасрах сиксе тӑрса хӑй ҫыннисене:— «есир ӑна йытӑсемпе тулаттарса вӗлерттерӗр!» тесе кӑшкӑрать, тет. Улпут ҫыннисем ҫасах хайар йыттисемпе хӑвалаттарса тытса, хай пӑрӑва ҫасах ниҫта йурӑхсӑр ҫуркалаттарса пӑрахтараҫҫӗ.

*И. Юркин.*

19656

## Ҫӗнӗ кӗнекесем сутӑнаҫҫӗ.

1) Ваттисен сӑмахӗсем. . . . . . . . . . . 5 пус
2) Йумахсем. . . . . . . . . . . . . . . 5 пус
3) Калаҫусем. . . . . . . . . . . . . . 5 пус
4) Шутсем. . . . . . . . . . . . . . . . 5 пус
5) Халапсем. . . . . . . . . . . . . . 5 пус

и т. д.

Кӗнекесем ҫырса илес тийекенсене адресӗм ак ҫапла ,,*Ст. Анненково*, Симб. г., с. Репьевка И. Н. Юркину".